Телейлĕ эп пулăттăм çут тĕнчере
Эп курăттăм аслă кăвак тӳпене,
Тем пысăкăш савăнăçпа ман чĕре
„Пурăнап-ха!" тесе тапĕччĕ ун чухне.

Анчах та эсир ман ĕненĕвĕме
Пĕр тулă пĕрчи пек кăна чакарсассăн,
Вара уласа йĕрсе ярăттăм эп
Аманнă пантера майлах чунхаяррăн.

Мĕн курăп-ха эп ĕненӳсĕр, кам
пулăп?
Эп унсăр-çаратăннă ыйткалакан,
Уксах-чăлаха, мĕскĕне тăрса юлăп,
Эп унсăр-çĕр хурчĕ, сĕм суккăр ăман.

Ĕненĕвĕме вĕлерес тетĕр, тен?
Вăл ман кăкăра ăшăтать яланах,
Вăл — „пурнăç аван, ăслăрах пулĕ"
тет,
Çавна вĕлересшĕн-и? Ку-кăлăхах.

Мĕнле хĕçпăшал сирĕн? Пуля?
Граната?